# Районăн харсăр çыннисем

Проект Чăваш Республикин цифра аталанăвĕпе информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин пулăшăвĕпе пурнăçа кĕрсе пырать

**Нумаях пулмасть Чăваш Республикин 2020–2025 çулсенчи социаллă пурнăçпа экономика аталанăвĕн комплекслă программипе килĕшӳллĕн культурăпа искусствăна аталантармалли тĕп ĕçсене те палăртрĕç.**

**«Культура» наци проекчĕпе палăртнă тĕллевсем асăннă проектăн «Культура хутлăхĕ», «Пултарулăх çыннисем», «Цифра культури» регионти проекчĕсемпе килĕшӳллĕн пурнăçа кĕрсе пыраççĕ. Çав ĕçсем валли 875,1 миллион тенкĕ уйăрма палăртнă.**

**–Умра пысăк тĕллевсем – наци культуринче паян мĕн пуррине упраса хăварасси. Çавăнпа культурăри çак пуянлăха çитĕнекен ăрăва памалли, вĕсене кăсăклантармалли çĕнĕ майсем шырамалла. Яллă вырăнта культурăн çĕнĕ çурчĕсене çĕкленĕ вăхăтрах вĕсене çĕнĕлле ĕçлеттерсе ямаллине шута хумалла. Çав форматсем пире инçĕшне пăхмасăр тĕрлĕ территорие пĕр чăрмавсăр тыткăнлама, парăнтарма пултарччăр. Эпир хамăрăн ĕçе тĕнчен кирек хăш кĕтесĕнче те кăтартма пултармалла. Пирĕн наци культури енĕпе ĕçлекен пур институтăн ĕç-хĕлне тĕпрен лайăхлатмалла, вĕсене çыхăнтарма, çывăхлатма пулăшмалла.**

**Çĕршывăн культура пурнăçĕнче те Чăваш Ен паллă вырăн йышăнса тăнипе мухтанатпăр эпир. Пĕтĕм Раççейри тата тĕнчери фестивальсемпе конкурссенче тăван республикăн ăс-пуянлăхĕпе паллаштаракан пултарулăх коллективĕсен çитĕнĕвĕсемшĕн савăнатпăр,–тет Чăваш Республикин Пуçлăхĕн тивĕçĕсене вăхăтлăх пурнăçлакан Олег Алексеевич Николаев.**

**–Вĕрентӳ, сывлăх сыхлавĕ, культура – «виçĕ кит» – çынна инвестици хывакан отрасльсем. Культурăн пурнăçри пĕлтерĕшĕ хăйне евĕрлĕ. Вăл çыннăн чунне пуянлатать. Ăс-хакăлне ӳстерет. Пирĕн тĕллев – çав пуянлăха республикăра пурăнакан кашни çын патне çитересси. Чăваш Енĕн пысăках мар территорийĕнче 120 ытла халăх представительне туслă пурăнма майсем туса панă. Çĕршывра, тĕнчере тем тĕрлĕ лару-тăру пулнă тапхăрта та пирĕн республикăра туслăхпа килĕшӳ хуçаланнă. Çакăнта чăваш халăхĕн тӳпи пысăк пĕлтерĕшлĕ. Эпир сирĕнпе, пĕр енчен, тарăн тымар янă йăласене сыхласа хăваратпăр, тепĕр енчен, вĕсене малалла аталантаратпăр. Çав вăхăтрах юнашар пурăнакан халăхсене те, вĕсен чи çывăх йăли-йĕркисене те хисеплетпĕр.**

# Туслă коллектив чăмăртаннă



♦ Р.П.Маркова районти халăх хорĕпе (архивран).

## Тăвай енри халăх тата ветерансен хорĕсем

Район центрĕнче икĕ хор ĕçлет. Пĕри чылай маларах йĕркеленнĕ, темиçе çултан ăна халăх ят панă, ветерансен хорĕ вара 2004 çулта сцена çине тухнă.

Хăйсен пархатарлă ĕçĕпе наци культурин чи лайăх йăли-йĕркисене упрама, сумлăн малалла аталантарма Тăвайри халăх хорĕ чылай тăрăшать. Унсăр районта уявсемпе тĕрлĕ культурăллă мероприятисем сахал иртеççĕ. Юрракĕвве юратни, чăваш халăх культурине сарасси пĕр çĕре пухнă тĕрлĕ ӳсĕм çыннисене. Тĕрлĕ çĕрте ĕçленисем пур унта. Пултарулăхĕпе районта кăна мар, республикăра та тĕрлĕ смотр-конкурс, фестиваль лауреачĕ тата дипломант пулса тăнă. Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинче Çĕнтерӳ тунăранпа 60 çул çитнине халалланă «Ăрусем пĕлччĕр» ятлă районти смотр-конкурсра (2005 ç.) тата «Сталинград патĕнчи çапăçу» республикăри фестивальте (2018 ç.) – халăх хорĕ, патриотла юрăсен «Пурăн тата асту» районти фестивальте (2012–2020) ветерансен хорĕ çĕнтернĕ.

Сумлă артистсен концерчĕсене яланах хапăлласа йышăнаççĕ çынсем. Репертуарĕ пуян вĕсен, Раççей, Чăваш Ен, Тăвай тăрăхĕ, ĕç тата çар паттăрĕсем çинчен хывнă юрăсене шăрантараççĕ, ĕлĕкхи ырă йăла-йĕркесене малалла аталантараççĕ. Юрă-кĕвĕпе халăха шанăç, хавхалану кӳреççĕ, чун-чĕрисенче ырă тĕллевсем çуратаççĕ.

15 çулхи юбилейне пĕлтĕр паллă тунă ветеран-юрăççсем Тăвай ен пурнăçĕнче ырă тĕслĕх кăтартаççĕ, хăйсен пархатарлă ĕçĕпе унăн исторsingle ийĕнче сумлă йĕр хăвараççĕ.

Ветерансен «Надежда» хорне йĕркеленĕренпе паянхи кунччченех ЧР культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ Римма Павловна Маркова ертсе пырать.

–Пĕр çынпа ĕçленĕ чухне те чылай вăй хумалла-ха та. Кунта вара çирĕм ытла çын. Кашнинпе пĕр чĕлхе тупма пĕлмелле, репетицисене тăтăшах çӳреме хавхалантарса тămалла, çулĕсем пуррисене хисепленине палăртмалла,–тесе пуçларĕ хăйсен ĕçĕ пирки пыракан калаçăва хормейстер.

Хорсем хăйсен пултарулăхĕпе савăнтарма пуçланă пĕрремĕш кунранах хисеплĕ те активлă çынсем юрлама çӳреççĕ. Валентина Кирилловна Терентьева, Ираида Кирилловна Галкина, Елизавета Ильинична Ильина, Екатерина Титовна Федорова, Галина Матвеевна Маковей, Ольга Федоровна Шишова, Нина Николаевна Иванова, Людмила Аркадьевна Никитина, Ольга Владимировна Моисеева, Елена Семеновна Васильева, Зоя Максимовна Григорьева тата ыттисем те, списока малалла та тăсма пулать. Халăх хорĕн чи пысăк стажлă участникĕсем – Вячеслав Петрович Марков (вăтăр ытла çул), Вера Петровна Абржина (çирĕм ытла çул), Людмила Ивановна Егорова, Леонилла Геннадьевна Семенова, Зинаида Федоровна Николаева...

Коллективсенче пурте тенĕ пекех ĕç ветеранĕсем, вĕрентĕвĕн хисеплĕ ĕçченĕсем, сывлăх сыхлавĕнче ырă тĕслĕх кăтартнисем, бухгалтерсем, район администрацийĕн яваплă ĕçĕнче вăй хунисем... Йыш майĕпен çĕнелсе пырать, аслисемпе пĕрле çамрăксем те канма çӳреççĕ культура çуртне. Савăнăçне те пĕрле пайлаççĕ вĕсем, хуйхине те, туслăха питĕ хаклаççĕ. Юрăççене тăван ене хисеплени, унăн чыс-сумне çĕклес тĕллев пĕрлештерет.

Çитĕнекен ăру вара культура çурчĕ çумĕнчи Римма Павловна ертсе пыракан кружока чунтан кăмăлланă. «Звонница» вокал студийĕн ачисем районти конкурссенче пĕр хутчен кăна мар çĕнтернĕ. Арина Биктимирова, Евгения Ильина лауреатсем пулса тăнă. Асăннă ушкăна дипломсемпе грамотăсем парса хавхалантарнă. Халăх хорĕ çумĕнче «Çăлкуç», «Ивушки» вокал ансамблĕсен юрри-ташшисене те хапăлласах йышăнаççĕ çынсем, тăвăллăн алă çупса тав тăваççĕ. Чи пахи – хĕрарăмсемпе пĕрле Римма Маркова хăй те çепĕç сассипе савăнтарать. Купăс лайăх калать, районти халăх инструменчĕсен ансамблĕ пĕрре кăна мар малти вырăнсене тухнă.

Юлашки çулсенче вара пирĕн районти ветерансен хорĕ пысăк хисепе тивĕçлĕ пулнă, «Çирĕп пирĕн çунатсем» республикăри конкурс-фестивальте виçĕ хутчен лауреат ятне илнĕ. Канаш хулинче йĕркелекен «Чун юрлать» районсем хушшинчи фестивале тăтăшах хутшăнать.

Владислав Степанов концертмейстер коллектива купăс каласа хавхалантарать.

## Юратăва хаклакансем

...–Урама тухсан
Ял çине пăхап.
Хĕрсене курсан

Савăнса утап,–вырăсла шăрантарать каччă сцена çинче. Музыкăна юратакан хĕр чĕринче, илемлĕ юрăçа сăнанă май, юрату çуралать. Çапла паллашнă 18 çулхи Римма Кузнецовапа çирĕмри Вячеслав Марков. Иккĕшĕ те Çĕрпӳри культурăпа çутĕç училищинче пĕлӳ пухнă. Илемлĕ баритон саслă çамрăкпа активлă, хăюллă пике хушшинче туслăх çирĕпленсе пынă çакăн хыççăн.

Римма пирĕн районти культура çуртĕнче ĕçлеме пуçланă, Вячеславăн тепĕр çулталăк вĕренмелле пулнă. Кĕске тĕлпулусем, вĕренӳ, ĕç... Кĕтмелли, чăтмалли самантсем вĕçленеççĕ пек ĕнтĕ. Пурнăç шăпи вара тепĕр пăрăнчăк тăвать. Каччăна Патшалăхăн юрăпа ташă ансамблĕн филармонийĕнче ĕçлеме сĕнеççĕ. Чиперкке Хусанти

(Малалли 6-мĕш стр.)

### Кĕске справка

Р.П.Маркова 1962 çулхи ака уйăхĕн çиччĕмĕшĕнче Çĕмĕрле районĕнчи Тукас ялĕнче çуралнă. Вăтам шкул хыççăн Çĕрпӳри культурăпа çутĕç училищинче «хор коллективĕн ертӳçи» специальноçа алла илнĕ.

1982 çулта направленипе Тăвайри культура çуртне ĕçлеме килнĕ, методистра тăрăшма пуçăннă хĕр. Районти культура пайĕн автоклуб заведующийĕнче ĕçлеме куçараççĕ ăна унтан. Каярахпа, 1999 çулхи юпа уйăхĕнчен культура çурчĕн хормейстерĕн тивĕçĕсене чунне парса пурнăçлама пуçлать.

Пысăк професси шайĕллĕ специалист пулнине кăтартса панă вăл хăйне. Коллектива пĕрлештерме, ăнăçлă ертсе пыма пултаракан хормейстер пулса тăнă Римма Павловна, ăслă-тăнлă, хаваслă кăмăллă, яланах хавхаланулла, культурăри тивĕçĕсене пысăка хурса хаклать. Ĕçре çитĕнӳсем тунăшăн парнесемпе тĕрлĕ дипломсене, 2005 çулта культура, национальноçсен, информаци политикин тата архив ĕçĕсен министерствин Хисеп грамотине тивĕçлĕ пулнă. 2010 çулхи çĕртме уйăхĕнче тухнă Указпа килĕшӳллĕн «Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ культура ĕçченĕ» хисеплĕ ят панă ăна. Хăйĕн пĕлĕвне культурăпа искусство институчĕн курсĕсенче çĕнетсех тăрать çаврăнăçуллă хĕрарăм.

# Туслă коллектив чăмăртаннă

(Вĕçĕ. Пуçламăшĕ 5-мĕш стр.)

культура институтне вĕренме кĕрет. Пĕри – гастрольте, тепри – сессинче. Çырусем Хусана Украинăран, Молдавинчен, Тутарстанран çитеççĕ.

Хаваслă тĕлпулусемпе уйрăлусем хыççăн вĕсем хăйсен шăписене 1983 çулта пĕр тĕвве пĕрлештереççĕ. Юратакан чĕресем йывăрлăх хыççăн йывăрлăх хыçа хăвараççĕ, пĕр уйрăм çын хваттерĕнче, унтан тепринче пурăнаççĕ.

## Çамрăк ăру

Яланлăха асра юлакан самант та пулать. 1985 çулăн пĕрремĕш кунĕнче Марковсен çемйине хĕрача хушăнать. Эмилия ят параççĕ ăна ашшĕпе амăшĕ. Пĕтĕм тимлĕх вĕсен юратнă пепки çине куçать. Тăхăр уйăх та вунпĕр кун иртет çапла, пĕчĕк чиперкке ак хăй тĕллĕн вичĕ утăм тăвать, тепĕр кунне – пиллĕк, улттă. «Ай, маттур»,–ырлаççĕ ачана аслисем.

Çамрăк çемьене кĕçех кивĕ çуртра пĕр пӳлĕмлĕ хваттер параççĕ. Тепĕр савăнăç! Халĕ вĕсен хăйсен кĕтес пур. Вячеслав Петрович хăвăртах шкаф, стенка, хĕр пĕрчи валли сĕтел-пукан, чуччу, кĕнеке çӳлĕкĕсем тата ыттине ăсталать. Римма Павловна нуски, костюм, калпак, алсиш çыхать. Миля хăй тĕллĕн выляма хăнăхса ӳснĕ. Тунă япаласемпе тĕрлĕ вăйă шухăшласа тупнă, калаçнă, юмахсенчи геройсене сăнарланă. Унăн хăйĕн тĕнчи пулнă. Хĕрача интереслĕнсе выляни виççĕшне пĕр çĕре пĕрлештернĕ, кĕçĕннине аталану çулĕпе малалла кайма тăтăшах пулăшнă аслисем.

Вĕсен хаваслă кил-йышне 1988 çулхи юпа уйăхĕн вунпĕрмĕшĕнче тепĕр «çĕнĕ кайăк» вĕççе кĕнĕ, хальхинче – ывăл. Вăл çемьене тата пысăкрах телейпе савăнăç илсе килнĕ, юратăва çирĕплетнĕ. Арçын ачашăн ашшĕ авторитет пулнă. Шăллĕпе Эмилия пĕр-икĕ сехетлĕхе хăйсем тĕллĕн те юлнă. Хĕр ача хăйĕн ответлăхне туйнă, Димăпа пĕрле тĕрлĕ вăйă вылянă, пысăк çын пек юмахсем шухăшласа кăларнă. Ача – ашшĕпе-амăшĕ тăрăшнипе тупăннă телей.

Эмилия вĕренӳре çитĕнӳхыççăн çитĕнӳ тунă. «5» паллăпа кăна туслăскер малтан Тушкилти лицейра вĕреннĕ, ăна кĕмĕл медальпе вĕçленĕ. ЧГУн – экономика, Яковлев ячĕллĕ ЧГПУн акăлчан чĕлхи факультечĕсенче икĕ аслă пĕлӳ илнĕ пултарулăскер. Хусанта банкра ĕçлет, çемьеленнĕ, мăшăрĕпе икĕ ача çитĕнтереççĕ.

Дмитрий спортпа туслă пулнă шкулта вĕреннĕ чухне, техникăпа кăсăкланнă. Хура тинĕс хĕрринчи «Орленок» лагерьте каннине халĕ те астăвать. Чăваш патшалăх ял хуçалăх академийĕн инженери факультетĕнче наука тĕнчине штурмланă, диплом илнĕ. Тинĕс-Çар Флотĕнче службăра пулнă вăл. Мăшăрланнă, Шупашкарта йăва савăрнă, çемьере – икĕ ача. Паянхи кун аслă Марковсен виçĕ пӳлĕмлĕ хăтлă хваттерте пурăнаççĕ, кĕçĕн Марковсем – икĕ пӳлĕмлинче.

## Ылтăн алăллă çемье пуçĕ

Çемье пуçне, Вячеслав Петрович Маркова, пĕлмен çын сахал пулĕ районта. Тăвайри линипе техника цехĕнче нумайранпа тăрăшать телейлĕ арçын, пултарулă тата аслă электромонтер вăл. Техникăна аван пĕлет, хуçалăхри кăткăс ĕçсене чунне парса пурнăçлать. Пĕчĕк трактор, çĕрулми лартмалли, çĕр сухаламалли агрегатсем, шăратса çыпăçтармалли аппарат тата ыттине ăсталанă. Токарь ĕçлекен станок пуçтарассипе те тимленĕ В.Марков.

Юратнă мăшăрне Римма Павловнана тăтăшах пулăшать. Районти художество пултарулăх коллективĕн активлă участникĕ вăл. «Çĕнтерӳ кунĕ» вырăсла юрра чуна пырса тивмелле шăрантарать çуллен, хумханнипе унпа юнашар тăрса юрлас килет чăнах. Ăстаçă хăй тунă япалисене куравсенче те паллаштарнă. Тăвайри виççĕмĕш номерлĕ шкулчченхи учреждение çӳрекенсене çирĕм ытла çул Çĕнĕ çул уявĕсенче Хĕл Мучи пулса савăнтарнă ырă кăмăллăскер. Çывхаракан уйăхра Вячеслав Петрович паллă юбилейне уявлассине вулакансене вăрттăн пĕлтернĕшĕн кӳренмест пулĕ вăл. 100 çула çиттĕр харсăрскер.

## Асăнмалăх япаласене упраççĕ

Марковсен шкатулкисенче çемье реликвийĕсем упраннине асăнмасăр иртес килмест. Кукашшĕн медалĕсем, Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинчен янă çырусем, кукамăшĕн ĕлĕкхи мăй çыххи, килте тĕртнĕ пир, масмак, сурпан, кивĕ сăн ӳкерчĕксем пур. Ачасем вĕсемпе, аслă ăру çыннисен пуянлăхĕпе, тăтăшах паллашаççĕ. «Иртнисĕр пуласлăх çук, ĕлĕкхине лайăх пĕлмелле çамрăксен, аслисенчен юлнă япаласене таса упрамалла. Пурне те ырлăх-сывлăх сĕнес килет. Эпир пурте йывăрлăх мĕн иккенне пĕлетпĕр, чирлетпĕр, хурланатпăр, савăнатпăр, ывăнатпăр та, кӳренетпĕр те. Пĕр-пĕрне юратса, хисеплесе пурăнсан вара малалла кайма чăрмантаракан пулăмсене пурпĕрех хыça хăваратпăр»,– калаçăва çапла вĕçлерĕ Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ культура ĕçченĕ Римма Маркова.

Мухтава тивĕçлĕскере тата пысăкрах ӳсĕмсем сунатпăр. Римма Павловна палăртнисене çине тăрса пурнăçлать, çынсене юрăпа туслаштарать, хавхаланса пурăнма хистет, пурнăçа илемлĕрех тăвать.

А.НИКИТИНА.

«ЗЕМСТВО ТУХТĂРĔ»

# Çамрăк специалист

**«Земство тухтăрĕ» программăпа Тăвайри тĕп больница çĕнĕ специалистпа пуянланнă.**

Наталия Григорьева кăçал Чăваш патшалăх университетĕнчен медицина факультетĕнчен вĕренсе тухнă хыççăн ĕç çулне тăван районпа çыхăнтарма шутланă. Элпуç тăрăхĕнчи 5 ялшăн – Ураскассинче, Çĕнçырмара, Нӳшкассинче, Кивĕ Пуянкассинче тата Элпуçĕнче пурăнакансемшĕн ятарлă пĕлӳ илнĕ врач-терапевт килни пысăк савăнăç ĕнтĕ.

Наталия Петровна Йăнтăрчă ялĕнче çуралса ӳснĕ. 7 класс хыççăн тăрăшуллă хĕрача Шупашкарти Лебедев ячĕллĕ лицейра пĕлĕвне тарăнлатнă, унтан аслă шкула вĕренме кĕнĕ.

Çамрăк тухтăрпа калаçма тӳр килчĕ. Малтанхи пациентсем сире сăпайлă, кăмăллă пулнине пĕлтерчĕç-ха, тетĕп.

Мăшăрĕ Элпуçĕнчен, унтах пурăнать çамрăк çемье. Тăван кĕтесрех тымар ятăрччĕ тин çеç ĕçе пуçăннă тухтăр.

Р.ШУМОВА.

# Купол лартрĕç



**Иртнĕ çулхи ноябрь уйăхĕнче Мучар ялĕнче чиркӳрен инçех мар çăл тĕлĕнче шыва кĕмелли илемлĕ купель туса лартрĕç. Купель тăррине купол вăхăтра лартайман. Августăн 20-мĕшĕнче Туçари чиркӳрен Александр атте купол тăвакан çынсене илсе килнĕ, вĕсемех хăпартса лартрĕç. Ăна Патăрьел районĕнчи Туçа ялĕнчи чиркӳ территорийĕнчи мастерскойра тунă.**

Мучарти купель умĕнче Роман атте, ял старости И.А.Немов, администраци специалисчĕсем А.А.Лабзина, Е.П.Жаркова, чиркĕве çӳрекен Л.А.Меркушина тата ыттисем кĕтсе илчĕç хăнасене. Купола лартма пулăшнăшăн тав турĕç.

В.ЛАВРОВА.

КОРРУПЦИ

# Витĕмлĕ кĕрешӳ кирлĕ

**Коррупци çулне пӳлесси – массăллă информаци хатĕрĕсенче тăтăшах хускатакан темăсенчен пĕри. Анчах ун çинчен çырни-калаçни çителĕксĕр, ăна хирĕç чăнласах кĕрешмелле.**

Республика Пуçлăхĕн тивĕçĕсене вăхăтлăх пурнăçлакан право сыхлав органĕсене бюджет укçи-тенкине тĕллевсĕр тăкакланипе çыхăннă преступленисемпе тагăклăн кĕрешме чĕнет. Çав кĕрешĕвĕн витĕмĕ те çук мар ĕнтĕ. Чăваш Ен коррупцие хирĕç кĕрешессипе начар мар шайра.

Республикăри прокуратура органĕсем патшалăх тата муниципаллă харпăрлăх пурлăхĕпе усă курнă чух саккуна пăснă тĕслĕхсем тупса палăртнă, чылай протест тăратнă, тавăçĕсене суда янă, должноçри çынсене дисциплина тĕлĕшпе явап тыттарнă.

А.ИВАНОВА.

# Ытларахăшĕ çынсен айăпĕпе

**Иртнĕ эрне вĕçĕнче республикăра 7 пушар тухнă. Çӳп-çапа, типĕ курăка асăрханусăр çунтарнипе Улатăр, Вăрнар тата Елчĕк районĕсенче «хĕрлĕ автан» виçĕ хутчен алхаснă.**

Çурла уйăхĕн 23-мĕшĕнче ирхине икĕ сехетре Канаш районĕнчи пĕр ялта вуткăварпа мунча, çурт, хуралтăсем, кӳршĕри çурт сиенленнĕ. Çав вăхăтрах пушар Шупашкар районĕнчи Шишкентерте хăйĕн хăватне кăтартнă. Ирхине пилĕк сехетре «Заря» коллективлă юлташлăхра çурт тата кӳршĕри икĕ хутлă объект тăрри çунса кĕлленнĕ. Каçхине улттăра Çĕрпӳ хулинче строительство материалĕсен купи, гараж тăрри çуннă.

Пирĕн районти Енĕш Нăрвашра мунча çунма пуçлани те ялти çынсен сехрине хăпартнă, Тăрмăш çывăхĕнчи уйра улăм купинчен кĕл кăна тăрса юлнă. Нумаях пулмасть Мучарта та улăм купине пĕтĕрнĕ «хĕрлĕ автан». Тăвай енре кăçал 12 хутчен вут-кăвар тухнă.

Çулталăк пуçланнăранпа республикăра 1089 пушар пулнă, 34 çын вилнĕ, 49 çын аманнă. Хуçалăхсене пурĕ 449 миллион тенкĕлĕх сиен кӳнĕ.

Д.КУЗЬМИН.

ПУЛНИ–ИРТНИ

# Суранланнисене больницăна ăсатнă

Кăçалхи августăн 20-мĕшĕнче 15 сехет те 50 минут тĕлнелле КиаРио водителĕ çул çитмен (2010 çулхи) велосипедист çине пырса кĕнĕ. 10 çулхи ача çулăн сулахай енĕпе пынă, çул юхăмĕнче хăрушлăх кăларса тăратмастăп-и-ха тесе шутласа илеймен. Çапла вара автомобиль водителĕ велосипедист çине кĕрсех каяс мар тесе электричество юпи çине пырса тăрăннă.

Çул-йĕр инкекĕнче çамрăк велосипедист, 4 пассажир (вĕсенчен виççĕшне çул çитмен) ӳт-пӳ тĕлĕшĕнчен суранланнă, вĕсене Канашри сиплев учрежденине леçнĕ.

Августăн 24-мĕшĕнчен пуçласа сентябрĕн 11-мĕшĕччен район территорийĕнче **«Асăрханăр – ачасем!»** профилактика мероприятийĕ йĕркелеме йышăннă. Вĕренӳ çулĕ пуçланнă май, çул-йĕр çинче уйрăмах тимлĕ пулмалла. Ашшĕ-амăшĕн те ачисене çул çӳремелли правилăсене ăнлантарсах тăмалла. Водительсен шкул умĕпе иртнĕ чух питĕ асăрханулă пулмалла.

И.СКВОРЦОВА.

# Инвалидсемшĕн тимлеççĕ

**Пирĕн пурнăçра инвалидсене социаллă пулăшу парассине лайăхлатсах пыраççĕ.**

Вĕсене тĕрлĕ тӳлевсемпе вăхăтра тивĕçтереççĕ. Хăйсем çӳрейменнисене коляска е автотранспорт илме пулăшаççĕ. Машинисене лартма ятарлă паллăсемлĕ лапамсем уйăраççĕ. Акă, Тăвайри «Аль» ФСК территорийĕнче сусăр çынсене транспорт хатĕрĕсене лартма темиçе çул каяллa ятарлă вырăн уйăрнăччĕ. Объектсемпе çуртсене кĕмелли картлашкасем çывăхĕнче колясккăллисем валли пандуссем тăваççĕ. Инвалидсене ĕçе илнĕ чухне çăмăллăхлă йĕркепе усă кураççĕ. Инвалид-ача пур çемьере транспорт налукĕ тӳлемеççĕ.

В.ВАСИЛЬЕВ.

КĔСКЕН

● Çитес çул Республика кунне Çĕмĕрле районĕнче ирттерме палăртнă. Уяв ирттерме палăртнă вырăна тирпейлесе хăтлăлатма йышăннă. Ял хастарĕсем уяв проектне туса хатĕрлеççĕ.

● Кăçал Чăваш Енре август уйăхĕн çурри тĕлне 23 ача чӳречерен тухса ӳкнĕ, тăватăшĕ вилнĕ.